Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**.
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства.

**Автор: Лисина Ева Николаевна**

**Книга: Улăхпи**

# Рассказ: Кĕтсе илекен пулсан аван çав!

Улăх хĕррипе утнă чух мана акă мĕскер аса килчĕ: ача чухне мана «хăмла шалçи» тесе йĕкĕлтетчĕç. Ку ача чухне пулнă-ха. Кайран эп тата ӳснĕ вĕт-ха. Ăнкаратăр-и, мĕнле тăрнаккай эп! Кунти курăк вара манран та çӳллĕ!

Хулара асăрхаманни-курманни халь куçа тăрăнать. Пур те – юнашар. Пурте куçа çиет, пуçа унталла та кунталла пăркалантарать, хăлхана вылянтарать. Акă хĕвелĕ, анăçалла самаях сулăннă пулин те, кăнтăрлахи пекех çутатать. Акă тӳпенелле пăрлатса хăпаракан тăри ушкăнĕ. Курăкĕ, курăкĕ вара – пурçăн шерепесем, пыл шăрши саракан хĕрлĕ-сенкер-кĕрен-шурă пуçсем...

Кăштахран ялĕ те курăнса кайрĕ. Çӳллĕ йывăçĕсем йăмра иккен. Варкăш çил килет те, çулçăсем шăпăрр! тăваççĕ, симĕс йăмра вара кĕмĕл тĕслĕн çутала-çутала илет.

Ял хĕрринчи кил умне çитрĕм те тĕлĕннипе тăп чарăнса тăтăм. Хапха умĕнче çăлтăр хушка çамкаллă хĕрлĕ ĕне тăрать, ун тавра тем-тем тĕслĕ лĕпĕш пĕлĕт пек çаврăнать, асамат кĕперĕ евĕр ункăланать. Эсир кун пеккине курнă пулĕ-ха, эпĕ вара пуçласа куратăп та çавăнпа ним калама та пĕлместĕп.

Ĕне мана саламлать:

– Килех Улăхкассине! Ак сан çурту. Пурăн, ĕçле.

Аптăраса та тĕлĕнсе кайнипе эп тавах теме те ăнкараймарăм. Эпĕ тăна кĕнĕ çĕре ĕне таçтах çитнĕ: ав улăхпа пырать, патша пек васкамасăр, хуллен утать, ун умĕнче тĕрлĕ тĕслĕ пĕлĕт çаврăнать...

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.